Г.А. Анисимов

Н.И. Ашмарин словарĕпе вĕрентӳре усă курасси

Кашни халăхăн ăна çутта кăларас тесе ăнтăлакан ăсчахсем пулни такама та паллă. Ун пек пысăк ăс-хакăллă çынсем пур чухне те тăван несĕл варĕнче ӳтленсе амаланмаççĕ. Сайра-хутра вĕсем ытти таврашран тухса хăйсен пултарулăхне тепĕр йăха халалласççĕ. Çавсен шутĕнче чĕлхе наукин икĕ Улăпне асăрхамасăр иртме çук. Иккĕшĕ те вĕсем халăх сăмахĕсен кĕнекисене хайласа тĕнчипе паллă ăсчахсем пулса тăчĕç, ĕмерлĕхех этемлĕх асĕнче юлма тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсенчен пĕри – Владимир Иванович Даль. Ятлă-сумлă датчанин вырăс халăхне тăватă томлă сăмахсен кĕнекине çырса парнеленĕ. Ячĕ те унăн хăтлă: «Толковый словарь живого великорусского языка» (1863-1866). Çак словарь ĕлкипе вырăссен чаплă çынни – пирĕн ентеш – Николай Иванович Ашмарин çĕр çул каялла чăвашсен чĕрĕ калаçу чĕлхин сăмахĕсен пуххине туса хатĕрлеме шут тытнă та хăйĕн ĕмĕрне çак пархатарлă ĕçе парăнса ирттернĕ. Вăтăр çичĕ çул хушши пĕр ĕмĕтпе çунса, пăтравлă, тăнăçсăр саманара тем чул йывăр-тумхах курсан та, пысăк çемйи выçăллă-тутăллă пурăнсан та, курайман çынсем темле пăтăрмах, сиен тусан та, Николай Иванович хăй пуçăннă паттăр ĕçе алăран веçертмен, кунĕн-çĕрĕн ырми-канми тăрăшнă, вун çичĕ томлă словарь хайласа чăваш халăхне чапа кăларнă. Ашмаринăн ĕçĕ-хĕлĕ пирĕншĕн пуриншĕн те, ытларах çамрăк тепчевçĕсемшĕн, студентсемшĕн, çав тери ырă тĕслĕх пулса тăрать, чĕрере хавхалану вăратать. Эпир ытларах чухне хамăра шеллетпĕр, Николай Иванович пек вăйран кайса ĕçлеме хăнăхман.

Сăмах майăн çакна та асăрхаттарса хăвармалла: паллă чĕлхеçĕсен еткерне тишкерсе пăхан та, словарьсенчен пахи нимĕн те çук пек туйăнать. Нумай ăсчахсен кĕнеки-статйисем тĕпчев шурлăхĕнче путса çухалаççĕ, манăçа тухаççĕ. Анчах та словарьсен кун-çулĕ тем тесен те вăрăмрах та пархатарлăрах. Мĕншĕн çапла шухăшлатпăр? Хуравĕ куçкĕретех: чăваш чĕлхине тĕпчекен пĕр ăсчах та Дамаскинăн XVIII ĕмĕрте çырса кăларнă словарĕпе паллашмасăр тăман. XIX ĕмĕрте тухнă словарьсем пирки те çакнах

каламалла: В.П. Вишневский çырнă сăмахсен пуххи – «Начертания правил чувашского языка и словарь, составленный для духовных училищ Казанской епархии» (унта 2800 чăваш сăмахне палăртса хăварнă); Н.И. Золотницкий калăпланă сăмахсен кĕнеки – «Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен» (кунта вара 1900 чăваш сăмахĕ тымарланса юлнă). Ку словарьсем сăмах шучĕ енчен чухăн пулсан та, сăмахĕсем чăваш сасă тытăмне, нĕрне тивĕçтермесен те, вĕсене пысăк шая хурса хакламалла. Пĕтĕмĕшпе каласан, хăть те мĕнле словаре те хурласа сивлеме кирлĕ мар. Ĕмĕртен паллă ĕнтĕ: чĕлхе наукинче икĕ ĕç уйрăмах йывăр пулса тухать – словарь çырасси тата грамматика хайласси. Тепĕр тесен, çакă икĕ япалана – словарьпе грамматикăна – критиклеме те çăмăлтарах: вĕсем кăлтăксăр пулмаççĕ. Çавăнпа та вĕсене хакланă чух çăмăлттайлăх та, явапсăрлăх та ан пултăр. Ахальтен мар ĕнтĕ Н.И. Ашмарин, хăй те малтанхи чăваш словарĕсенче чылай çитменлĕх асăрханă пулин те, вĕсене уяса сумланă.

20-мĕш ĕмĕрти чăваш словарĕсене çырса е юсаса кăларнă чух та пирĕн паллă чĕлхеçĕсем Н.В. Никольский, В.Г. Егоров, М.Я. Сироткин, И.А. Андреев, Н.П. Петров, Л.П. Сергеев, А.Н. Тихонов, М.Ф. Чернов, М.И. Скворцов профессорсем те çак виçерен тухман. Пуринчен ытларах вĕсемшĕн Н.И. Ашмаринăн Словарĕ иксĕлми ăслăлăх çăлкуçĕ пулса тăчĕ, кашни сăмахăн пĕлтерĕшне, тупсăмне, тĕшшине палăртса хума пулăшрĕ. Акă пĕр тĕслĕх çеç илер. М.И. Скворцов редакциленĕ «Чăвашла-вырăсла словарьте» (Мускав, 1982; 20 с.) **авăк** сăмах статйисене (омонимсене пула) калăпланă чух Н.И. Ашмаринăн «Чăваш чĕлхи словарĕн» пĕрремĕш кăларăмĕнче (Хусан, 1928; 42-44 с.) палăртнă сăмах пĕлтерĕшĕсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе усă курни куç умĕнчех темелле.

авăк I. миг, мгновение, момент // мгновенный, моментальный; **пĕр авăк хушшинче** в одно мгновение (Н.И. Ашмарин словарĕнче çапла çырнă. **Пĕр авăк** значит небольшой промежуток времени)...

авăк II. 1. Изгиб, извилина // изогнутый, извилистый, кривой; **юхан шыв авăкĕнче** в излучине реки; **авăк куçхарши** изогнутые брови; **авăк патак** кривая палка. 2. гибкий, упругий; **парăр мана авăк уххăма!** фольк. дайте мне мой гибкий лук! (Ку сăмах пĕлтерĕшĕсене Н.И. Ашмарин **ав, авăнчăк, авкаланчăк** сăмахсен тупсăмне уçса кăтартнă чух палăртать темелле; 34-37 с.)

авăк III. 1. Порывистый, шквалистый, переменчивый (о ветре) // порывисто, порывами; **авăк çил** порывистый ветер (Н.И. Ашмарин Словарĕнче: **Авăк** порывистый, неравномерный (о ветре). Паян çил пит авăк, арман авăртма хăрамалла. Сегодня очень порывистый и неравномерный ветер, поэтому молоть на мельнице опасно). 2. Вспыльчивый, резкий // вспыльчиво, резко; **авăк сăмах** резкое слово; **авăк çилĕ** вспышка гнева; **авăк çын** вспыльчивый человек (Н.И. Ашмарин Словарĕнче çапла çырса хунă: В перен. см. говорится о том, кто вспыльчив, но отходчив. Авăк çын вăл, час çилленет. Он вспыльчивый человек, его легко рассердить. Вăл питĕ авăк çилĕллĕ. Он очень вспыльчив. Авăк çилĕллĕ çынпа пĕлсе калаçас пулать. С вспыльчивым человеком надо говорить умеючи. 3. перен. порывистый, легко увлекающийся, непостоянный; **авăк кăмăл** увлекающаяся натура (Ашмарин Словарĕнче çак сăмах пĕлтерĕшне кăшт урăхларах уçса панă: «Это слово иногда употребляется для означения человека, который с жаром принимается за работу, но скоро охладевает к ней. Авăк çын вăл).

Пĕтĕмлетсе каласан, çакна уйрăмах палăртмалла: чĕлхеçĕ, хăйĕн ятне историре хăварас тесен, капмар, ĕлккен, сумлă словарь çыртăр; чаплă словарь ăсталакана халăх ĕмĕрлĕхех тав тăвĕ. Лайăх словарь вăл – асăнмалăх чĕр палăк, сӳнми тивлет. «Тайма пуç!» – тетпĕр эпир те пин саслăн, Николай Иванович Ашмарин профессора чысласа. Унăн пултарулăхĕ кашни чăваш чунне савăнтармалла.

Н.И. Ашмаринăн ăнлантару Словарĕ вăтам шкулта та, аслă вĕренӳ керменĕнче те куллен тыткалакан кĕнеке пулмалла. Вăл пирĕн халăх шухăшлавне, кăмăлне, туйăм-сисĕмне, йăли-йĕркисене пĕлсе тăма, чăвашлăха

çирĕплетме пулăшать, хистет. Анчах, шел пулин те, çак Словарьпе нумай шкулсенче кирлĕ таран усă курайманççĕ-ха, усă курма та тăрăшмаççĕ е пĕлмеççĕ пулас. Сăлтавĕсем кунта темиçе ĕнтĕ. Пĕрремĕшĕнчен – Ашмарин Словарĕ халĕ – сайра тĕл пулакан кĕнеке. Чылай шкул библиотекинче ăна курма çук: е нихçан та ку Словаре туянман, е кĕнеке çӳлĕкĕ çинче тусанланса выртнине асăрхаса ăна шутран кăларнă (списать тунă). Акă тата тамаша. Шупашкарти «Руссика» издательство 1994 çулта Н.И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» пичетлеме пуçăннăччĕ кăна, анчах укçа-тенкĕ çитменнине е пирĕн тимсĕрлĕхе, сӳрĕклĕхе пула ку ырă ĕç путланса ларчĕ. Мĕнле пулсан та ăна вĕçне çитересчĕ, каллех ĕçе тытăнса кашни шкула çак Словаре ярса парасчĕ. Иккĕмĕшĕнчен – вĕрентӳре словарьсемпе мĕнле усă курасси çинчен ятарласа çырнă методика материалĕсем пирĕн çукпа пĕрех. Кун пирки чăваш чĕлхи вĕрентекенсем çав тери япăх ĕçлеççĕ пек туйăнать, методика ыйтăвĕсене юлхавлăн çутатса параççĕ. Ку кирлĕ наукăна пирĕн республикăра çителĕксĕр хисеплени, сума суманни курăнать. Юлашки хĕрĕх çул хушшинче чăваш чĕлхине шкулсенче вĕрентесси пирки çырнă пĕр кандидат диссертацийĕ те хӳтĕлемен. Халĕ шанăç çуралас пек туйăнать: désинститутра чăваш чĕлхипе литература кафедри чатăрĕнче темиçе хĕрупраç вăй хурать. Вĕрентӳçĕсене словарьсемпе епле ĕçлеме кирли çинчен çĕнĕлле сĕнӳ-канаш паракан тарăн шухăшлă, тĕрлĕ мелсене тĕплĕн кăтартса паракан статьясен ярăмне çырса кăлармалла. Çак çитменлĕх, паллах, чăваш чĕлхин пуянлăхне туйса тăма, унпа пуплевре анлăн усă курма чăрмантарать.

Ачасене ăнлантару словарьĕпе усă курма вĕрентесси виçĕ тапхăртан тăрать темелле: 1) словарьпе пуçласа паллашни; 2) унпа лексика ăнлавĕсене вĕреннĕ чухне усă курни; 3) грамматика урокĕсенче ачасен пуплевне аталантарас тесе словарь ĕçне явăçтарни. Пирвайхи тапхăрĕ вара чи кирли, чи явапли, мĕншĕн тесен вĕренекенсене малтанах кăсăклантармасан, кайран вĕсене хавхалантарма питĕ йывăр. Тепĕр чух тĕлĕнсе кайма çынна пĕр минут та çитет темелле, анчах чăн тĕлĕнтермĕш япала тума, уйрăмах ăс-хакăл ĕçне хайлама, нумай çул кирлĕ.

Астăватăп: Вăрнар районĕнчи Уравăш вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхи вĕрентнĕ чух Н.И. Ашмарин Словарĕпе 6-мĕш класс ачисене пуçласа паллаштарнă чух эпĕ вĕсене «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» чи малтанхи листине мĕнле эрешленине кăтартрăм, Словарьте малтан усă саспаллисемпе, кайран хупă саспаллисемпе пуçланакан сăмахсене вырнаçтарни çинчен каларăм. Ачасем пĕр тымартан пулнă сăмахсене кашнине уйрăм статья туса вырнаçтарнине Словарĕн пĕрремĕшпе иккĕмĕш томĕсенчи материалсене тишкернĕ чух пĕлчĕç. Анчах пăхатăп та – эпĕ ăнлантарни вĕренекенсене пĕрре те хумхантармасть. Куçĕсем çунмасçĕ. Хăшĕсем анаслани те курăнать. Мĕн тумалла?

Вара Николай Иванович мĕнле çын пулнине, чăваш сăмахĕсен пуянлăхне çырса илме ăна кам пулăшнине, вăл мĕнле вăй хурса ĕçленине палăртса калама тытăнтăм. Ачасене пĕр халапĕ ытларах килĕшсе кайрĕ (ĕçĕ вара чăнах та çавăн пекех пулнă тет): Николай Иванович Ашмаринпа Николай Андреевич Резюковăн Хусана каймалла пулнă иккен. Канаша вĕсене лашапа леçсе янă. Темиçе чăматанпа (унта алçырăвĕсем пулнă) вокзала кĕрсе вырнаçнă, билетсем туяннă. Пуйăсĕ те çитсе тăнă, анчах 45 минут каймасăр тăхтанă. Çав самантпа усă курса Николай Иванович тула кайма шут тытнă. Резюков чăматансемпе ларса юлать. Кĕтет-кĕтет – Ашмарин çук. Çур сехет иртет, хĕрĕх минут – Николай Иванович таçта çӳрет. Аптранипе Резюков чăматансене йăтать те туалета чупать. Ăна хирĕç Ашмарин тухать, тет. Аллинче – блокнот. «Вăт ăçта вăл – халăхăн ăс-хакăл çăлкуçĕ!» – хавхаланса калать, тет, Николай Иванович. Туалет стенисем çинчи пур витĕмлĕ пуплевсене, сăвăсене, намăс сăмахсене блокнотне çырса хунă та ача пекех хĕпĕртесе ӳкнĕ, тет. Ашмаринпа Резюков аран-аран çитсе хăйсен вагонне ларма ĕлкĕреççĕ те – пуйăсĕ çавăнтах тапранса каять.

Кун евĕр халап-юмахсем Н.И. Ашмарин çинчен татах та илтме пулать. Вăл кашни кунах ухутана çӳренĕ имĕш. Упа-кашкăр тытма мар – чăваш çыннисене хăйĕн «серепине» çаклатма. Николай Иванович вĕсенчен кашнинченех çĕнĕ сăмахсем кĕтнĕ, пĕр-пĕр сăмах пĕлтерĕшне, сĕмне пĕлес

тесе, вуншар ыйту парса аптратнӑ. Паллӑ чӗлхеҫӗ А.И. Иванов 1920-1921 ҫулсенче Ашмаринпа пӗрле «Атӑл юрри» журнал редколлегийӗнче ӗҫленӗ. Ҫакӑ журналта Николай Иванович «Ҫӗнӗ сӑмахсем» статйине пичетлесе кӑларнӑ, хӑй Чӗмпӗрти Чӑваш халӑх пӗлӳ институтӗнче ӗҫленӗ. «Эпир унпа институт килкартинче час-часах уҫӑлса ҫӳреттӗмӗрччӗ, – аса илет Алексей Иванович. – Чӑваш чӗлхи пирки Н.И. сахал мар ыйту парса тӗпчетчӗ. Тӗслӗхрен: Кунашкал ӑнлава сирӗн патӑрта мӗнле сӑмахпа палӑртса калаҫҫӗ? Ҫак сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ еплерех? Ку сӑмах форми мӗне пӗлтерет? Ҫакнашкал сӑмах формипе эсир хӑш чухне усӑ куратӑр? т. ыт. те, т. ыт. те. Ҫавӑн пек ыйтса, тӗпчесе вӑл пӗр-пӗр сӑмах пӗлтерӗшне, ку е тепӗр сӑмахӑн грамматика формин тупсӑмне тӗрӗслесе палӑртнӑ. Енчен эпӗ каланинче темле хӑйне тивӗҫлӗ хыпар-мӗн асӑрхарӗ пулсан, вӑл ҫавӑнтах ӑна блокнотне ҫырса хуратчӗ»[1].

Хӑйӗн асаилӗвӗнче И.Ф. Риманов та Н.И. Ашмарин Хусанти Хӗвелтухӑҫ педагогика институтӗнче профессор пулса ӗҫленӗ чух (1930) – чӑваш чӗлхин предложени тытӑмне тӗпченӗ май – ӑна тем чул ыйту парса хӑшкӑлтарни ҫинчен, «чӑн та тискеррӗн асаплантарни» ҫинчен ҫырать.[2]

Апла пулсан, Николай Иванович нихӑҫан та ытахаллӗн вӑхӑтне ирттермен, хӑйне пӳрнӗ ӗҫе, вӗҫне ҫитерес тесе, чунпа парӑнса туса пынӑ. Ку, паллах, вӗренекенсемшӗн ҫав тери паха кӑтартуллӑ тӗслӗх пулса тӑрать.

Н.И. Ашмарин Словарӗпе епле усӑ курасси ҫинчен калаҫнӑ чух шкул ачисене сӑмах статйисем мӗнле йӗркепе калӑпланине, пӗр тымарлӑ сӑмахсем йӑван-йӑван вырнаҫса тухнине, кирлӗ сӑмаха кӗнекере мӗнле тупмаллине, унӑн пӗлтерӗшне хӑш мелпе уҫса панине васкамасӑр, тӗплӗн ӑнлантарса памалла, ятарлӑ хӑнӑхтару ӗҫӗсене тумалла. Вӗсенчен темиҫе хӑнӑхтарӑвне палӑртса хӑварар: 1) тӗрлӗ сӑмахсене словарьте тупса кӑтартни; 2) сӑмах

---

[1] Иванов, А. И. Деятельность Н. И. Ашмарина – пример для подражания / А. И. Иванов // Н. И. Ашмарин – основоположник чувашского языкознания : сб. статей. – Чебоксары, 1971. – С. 256-257.

[2] Риманов, И. Ф. Мои встречи с Н. И. Ашмариным / И. Ф. Риманов // Н. И. Ашмарин – основоположник чувашского языкознания : сб. статей. – Чебоксары, 1971. - С. 260.

статйисен тытăмне тишкерсе сăнани; 3) çав статьясенче чăваш халăх йăли-йĕркисене, культурине, шухăш-кăмăлне мĕнле уçса панине асăрхасси; 4) пĕр-пĕр сăмах пĕлтерĕшне уçса памалли мелсем çинчен каласа пани; 5) словарьтен ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмахсене, хăлăхлă, сăпайлă, пархатарлă пулма хистекен пуплевсене çырса илсе хакласси. Кун пек хăнăхтарусене, паллах, ытти вĕренӳ тапхăрĕсенче те туса пымалла.

Лексика ăнлавĕсене уçса панă чух Н.И. Ашмарин Словарĕпе анлăн усă курмалла. Вăл чăваш сăмахĕсен паллă енĕсене çутатса пама чылай пулăшать. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене (сăн, хăтлăх, черчен), синонимсене (сыпнă, такана – «корытце под ковшом»; çапă, çатăрка – «слан из хвороста»), антонимсене (тăкак – тупăш, пулăшу – чăрмав), омонимсене (пуç – «голова», пуç – «макать»; пыр – «горло», пыр – «идти, ехать»), кивелнĕ сăмахсене (ăрăмçă, алтын, ахăм) тата ытти ăнланусене вĕреннĕ чух ку Словарĕн паха енĕ, чăнах та, уçăмлă палăрать.

Грамматика урокĕсенче те Н.И. Ашмарин Словарĕ ачасен пуплевне аталанма пулăшакан иксĕлми çăлкуç пулса тăрать, мĕншĕн тесен унти тĕслĕхсем – стиль тĕлĕшĕнчен те, чĕлхе илемĕпе пуянлăхĕ енчен те, вĕренекенсене йĕркеллĕ, чыслă, хисеплĕ, ятлă-сумлă пулма хĕтĕртнине шута илсен те – çав тери селĕм те аван. Вĕренмелли кĕнекесенчи хăшпĕр хăнăхтару тексчĕсем пур чухне те кăсăклă пулмаççĕ. Вĕсен вырăнне Н.И. Ашмарин Словарĕнчи сăмах статйисене вуласа киленмелле, унти шухăша кĕскен те витĕмлĕн палăртакан предложенисене çырса илсе асăма хăвармалла. Кунта ик-виçĕ тĕслĕх çеç палăртса хăварар: Хăш çын тĕрĕссине каласа айăпа юлать, хăш çын ултавпа-суяпа та тӳрре тухать. (Иной говорит правду и навлекает на себя осуждение, а другой и обманывает, и лжет и все-таки оказывается правым.) Çынна айăп тусан, ху та айăплă пулăн. (Если будешь обвинять других, то и тебя осудят.)[3] Ача-пăчана çамрăкла ирĕк ан пар, ун айванĕ хыççăн ан кай. (Не давай детям волю смолоду и не потакай их неразумию.)[4]

---

[3]Ашмарин, Н. И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки / Н. И. Ашмарин. – Ш., «Руссика» изд-во, 1994. 1-2 т. – 24 с.

[44] Çавăнтах. – 26 с.

Н.И. Ашмарин Словарĕнчи тĕслĕхсемпе вырăс чĕлхи урокĕсенче те усă курма пулать, уйрăмах чăвашларан вырăсла куçарнă чух ун тексчĕсем вырăнлă та кăмăллă темелле. Сăмахран:

Пысăк тĕме. Вăл тĕмене улăп çăпати тĕпĕнчен хăпăнса юлнă, теççĕ; тата хăшĕ авалхи çынсем вăрăсенчен хăраса пичĕкесемпе укçа алтса пытарнă, теççĕ. – Большой бугор. Говорят, что этот бугор образовался от земли, отставшей от подошв лаптей великана, а некоторые утверждают, что старинные люди зарывали там в бочках золото, боясь воров[5].

Кун евĕр тĕслĕхсене хăш класра, мĕнле темăна çутатса панă чух илсе кăтартнине вĕрентӳçĕ хăй татса парать. Çӳлте асăннă текст, сăмахран, VII–IX классенче глаголсен сăпатланман формисене – причастипе деепричастине – е предложенин уйрăм тăран кĕçĕн членĕсене вĕреннĕ чух та, хутлă предложенисене тишкерсе, вĕсемпе ачасене пуплевре усă курма хăнăхтарнă тапхăрта та юрăхлă пулĕ.

Эппин, пĕтĕмĕшле каласан, Н.И. Ашмарин Словарĕн вĕрентӳ ĕçĕнчи пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк та пархатарлă.

Анисимов, Г. А. Н. И. Ашмарин словарĕпе вĕрентӳре усă курасси / Г. А. Анисимов // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 1996. – № 2. – С. 67-71.

[55] Çавăнтах. – 40 с.